К 84.09(=Чув)
Д 13
Ч-38531

Василий Давыдов

ЧЁРЕ ХУШНИПЕ

Национальная библиотека ЧР
4-038531

С(чув.)
Д 13
К 894.09(=Чв)
Д13

Василий Давыдов

ЧӖРЕ ХУШНИПЕ

кр

#6112

БИБЛИОТЕКА
Союза писателей
Чуваш. АССР
Инв. № 1113

Чӑваш АССР Государство Издательстви
ШУПАШКАР · 1957

Ч-38531
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Давыдов
Василий Иванович

ПО ЗОВУ СЕРДЦА

Стихи и песни

Оформление художника ***В. Ф. СОЛОДОВНИКОВА***

Редактор ***Н. А. Александров***. Тех. редактор ***А. И. Краснов***.
Худ. редактор ***Л. И. Маевская***. Корректор ***В. Г. Бурнаевский***.

НТ 03382. Сдано в набор 5/III-1957 г. Подп. к печати 15/XI-1957 г. Формат 70×108/32. 4,11 печ. лис. Учетно-издат. 1,97. Тираж 3 000 экз. Заказ № 3276. Цена 1 руб. 30 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.
Гор. Чебоксары, Володарского, 5.

ПРОВЕРЕНО
28 10

ОКТЯБРЬ

Сĕм хура тыткăнран эс хăтартăн,
Вут Октябрь, Раççей çĕршывне.
Хĕн-хур пуснă çынна çунат патăн,
Çапса ватрăн патша сăнчăрне.

Йывăр пулчĕ, анчах парăнмарăн
Улпутсен, банкирсен ушкăнне.
Эс пире çĕнĕ çул уçса патăн,
Çӳле йăтрăн этем тивĕçне.

Пĕр тăван çемьене пĕрлештертĕн
Асап тӳснĕ мĕнпур халăха.
Хурçă пек туптаса çирĕплетрĕн
Пурнăçри илеме — туслăха.

Яланах ырăпа асăнатпăр
Паттăр крейсер «Аврора» залпне.
Малалла çĕнтерӳллĕн утатпăр
Пĕр тĕллев — коммунизм патне.

1957

ЛЕНИН УҪНĂ ҪУЛПА

Ҫуркунне çеçкесем çурăлаççĕ,
Лăпкăн, канлĕн сывлать çĕр-анне.
Халăхсем Ленина асăнаççĕ,—
Революцин сӳнми маякне.

Тăван парти, пире малалла
Ертсе пыр Ленин уçнă çулпа.
Эпир ĕмĕр пĕрле санпала!
Çапла халĕ тăватпăр тупа.
Тăван парти, пире малалла
Ертсе пыр Ленин уçнă çулпа.

Ҫуркунне çăлкуççем уçăлаççĕ,
Ытарма çук тĕнче илемне.
Халăхсем Ленина тав тăваççĕ,—
Хамăр партин ăсне, ялавне.

Тăван парти, пире малалла
Ертсе пыр Ленин уçнă çулпа.
Эпир ĕмĕр пĕрле санпала!
Çапла халĕ тăватпăр тупа.
Тăван парти, пире малалла
Ертсе пыр Ленин уçнă çулпа.

Çуркунне кайăксем савăнаççĕ,
Юратаççĕ хĕвел ăшшине.
Халăхсем Ленина пуç таяççĕ,
Пурнăçлаççĕ çулпуç ĕмĕтне.

Тăван парти, пире малалла
Ертсе пыр Ленин уçнă çулпа.
Эпир ĕмĕр пĕрле санпала!
Çапла халĕ тăватпăр тупа.
Тăван парти, пире малалла
Ертсе пыр Ленин уçнă çулпа.

1957

ÇĔРШЫВĂМĂР

Эй, çĕршывăмăр —
Çут хĕвелĕмĕр,
Сан çинчен юрă
Ҫĕвĕлерĕмĕр.
Сан тивĕçӳпе
Телей тупрăмăр,
Санпа пĕр пулса
Пурнăç турăмăр.

Эй, çĕршывăмăр —
Пирĕн чысăмăр,
Сан ятна ялан
Асра тытрăмăр.
Санпала эпир
Чăнлăх тупрăмăр,
Сан тивлетӳпе
Хисеп куртăмăр.

Эй, çĕршывăмăр —
Вăй-хăватăмăр,
Мĕнпур халăхсем
Тăванлантăмăр,

Санпа çĕнтерӳ
Эпир тупрăмăр,
Санпала пĕрле
Ĕмĕр утăпăр.

1946

ТĂВАН ПАРТИЕ МУХТАВ!

Ҫут хĕвел ялкăшса хăпарать,
Ҫĕршыв ылттăн гумпа ялтăрать.
Ёҫ юрри шăранать таврара,—
Иксĕлми вăй-хăват халăхра.

Хамăр аслă партипе
Мĕнпур халăх пĕрле.
Хамăр аслă партипе
Эпир тупнă телей.
Юр юрлатпăр пурте савăнса,
Тăван парти, сана мухтаса!

Эс упран, эс сыхлан яланах
Ҫĕршыври халăхсен туслăхне.
Чунтанах тав тăватпăр сана,—
Пурнăҫпа ҫĕнтерӳ ялавне.

Хамăр аслă партипе
Мĕнпур халăх пĕрле.
Хамăр аслă партипе
Эпир тупнă телей.
Юр юрлатпăр пурте савăнса,
Тăван парти, сана мухтаса!

Çĕршыв чапĕ ялан сарăлать,
Ырă ĕмĕт çĕклет кăмăла.
Пĕтĕм халăх хăюллăн утать,
Аслă парти, санпа малалла.

Хамăр аслă партипе
Мĕнпур халăх пĕрле.
Хамăр аслă партипе
Эпир тупнă телей.
Юр юрлатпăр пурте савăнса,
Тăван парти, сана мухтаса!

1948

ЧĔРЕ ЮРРИ

Чĕвĕл чĕкеҫсем,
Ҫепĕҫ шăпчăксем
Савăнса юрлаҫ янкăр ирхине.
Хастар каччăсем,
Ҫамрăк пикесем
Васкаса ӳтаҫ тулă пуссине.

Ылттăн уй-хирсем,
Ешĕл вăрмансем
Тухăйса тăраҫ пирĕн куҫ умне.
Ҫутă кӳлĕсем,
Хумлă тинĕссем
Чыс-илем кӳреҫ Совет ҫĕршывне.

Ырă шухăшсем,
Ҫĕнĕ ĕмĕтсем
Ялкăшса ҫунаҫ пирĕн чĕрере.
Хаклă тантăшсем
Ҫывăх тусăмсем,
Мухтаса юрлар чаплă ĕмĕре.

1955

ЛЕНИН КĔНЕКИ

Илтĕм Ленин томне аллăма,
Уçрăм унăн малти листине.
Вăл чĕнет пурнăçа юратма,
Вĕрентет вăй пухма çĕннине.

Ленин çырнă кашни сăмахра
Эп курап ĕмĕрсен ĕмĕтне.
Вăл сӳнмест, пурăнать халăхра,
Вăл чĕнет коммунизм патне.

Ленин çырнă кашни сăмахра
Çĕнĕ вăй, çĕнĕ шухăш вĕрет.
Тĕрĕслетпĕр эпир хамăра
Унпала чăн хĕрӳллĕ ĕçре.

Ленин çырнă кашни сăмахра
Эп куратăп çĕршывăн сăнне.
Çуралать ырă шухăш пуçра,
Вăл çĕклет, хал парать чĕрене.

1952

ÇУТĂ ЁМЁТ

Эреветлĕ чĕкеç пек
Вĕçеесчĕ,
Кăвак пĕлĕт хушшипе
Иртеесчĕ.

Аслă, чаплă Мускава
Каяясчĕ,
Чуна çывăх хулара
Пулаясчĕ.

Хĕрлĕ площадь варрине
Тухаясчĕ,
Çутă Кремль çăлтăрне
Кураясчĕ.

Мавзолее кĕрейсе
Пăхаясчĕ,
Хамăр Ленин аттене
Пуç таясчĕ.

Мускав ĕçлĕ халăхне
Тав тăвасчĕ,
Ёмĕр-ёмĕр пĕр-пĕрне
Манас марччĕ.

1938

ИРТНĔ ÇУЛ

Тайма пуçăм Совет халăхне, —
Вăл çĕклет çĕнĕ пурнăç çуртне.
Эпир утнă пĕрле, кар тăрса,
Яланах çĕршыва вăй парса.

Çавăнпа та сана манас çук,
Пире ырлăх, телей кӳнĕ çул.

Ĕмĕре туслă турĕ пире,
Куллен-кун тĕреклетрĕ мире
Хамăр шанчăк, чĕремĕр Мускав.
Ана уншăн чунтан пысăк тав!

Çавăнпа та сана манас çук,
Пире ырлăх, телей кӳнĕ çул.

Çирĕп тăчĕç хĕрӳ вахтăра
Ашхабад, Ереван, Ленинград...
Заводра, уй-хирте, стройкăра
Тухрĕ çын ĕçпеле паттăра.

Çавăнпа та сана манас çук,
Пире ырлăх, телей кӳнĕ çул.

Ăнса пулчĕ тырпул Çĕпĕрте,
Уншăн пĕтĕм çĕршыв хĕпĕртет.
Утрĕ хăвăрт, васкавлăн, кал-кал
Авалтан чапа тухнă Урал...

Çавăнпа та сана манас çук,
Пире ырлăх, телей кӳнĕ çул.

Епле халĕ чăтас, калас мар:
Çĕнелет, вăй илет Шупашкар.
Пурнăçа татах кĕртрĕç илем
Телей тупнă чăваш çыннисем.

Çавăнпа та сана манас çук,
Пире ырлăх, телей кӳнĕ çул.

1956

МАНĂН ЧУНĂМ ТАСА

Эп ĕçлерĕм çанна тавăрса,
Çĕршыва чĕререн юратса.
Çавăнпа манăн чунăм таса.

Эп кĕтмерĕм хама мухтасса,
Çӳремерĕм элек пуçтарса.
Çавăнпа манăн чунăм таса.

Эп çынсен туслăхне аркатса,
Çӳремерĕм сăмах çаптарса.
Çавăнпа манăн чунăм таса.

1957

1612

БИБЛИОТЕКА
Союза писателей
Чувашской АССР
Инв. № 1113

Ч-38531

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

2. В. Давыдов.

АТĂЛ

Эпир тӳснĕ хĕн-хур
нумай ĕмĕр хушши.
Çитмен пирĕн пата
сар хĕвелĕн ăшши.
Тулнă Атăл юнпа,
юхнă йӳçĕ куççуль.
Калама çук тискер,
йывăр пулнă кун-çул.
Аслă Атăл çине
этем тухнă çуллен,
Вăл шыранă ялан
ирĕк пурнăç, телей.
Анчах ырлăх пулман,
тăвансемĕр, ниçта,
Халран кайнă бурлак
вилсе выртнă унта...
...Çут Октябрь пире
çăлчĕ çак асапран,
Çапса ватрĕ тĕпрен
тыткăнлан сăнчăра!
Халĕ Атăл çинче
йăлтах урăх тĕнче,

Этем ун чĕлпĕрне
тытать хăй аллинче...
Çун эс, ылттăн хĕвел,
йăлтăр-йăлтăр çиçсе.
Асас çук тек хĕн-хур
аслă Атăл çинче.

1953

ТĂВАН ХУЛА

А тăл тăрăх хăпаратпăр,
Ак умра, инçех те мар,
Курăнса каять хуламăр —
Пирĕн капăр Шупашкар.

Эс ялан кĕтсе илетĕн
Пире çывăх тăванла,
Сăнупа илем кӳретĕн
Ирĕк аслă Атăла.

Савăнатпăр, тĕлĕнетпĕр
Эсĕ хăвăрт ӳснинчен,
Сăвă-юрă кĕвĕлетпĕр
Шупашкарăмăр çинчен.

Ĕмĕр пул эс пĕр тăванлă
Аслă, чаплă Мускавпа,
Пирĕн ĕçлĕ, çĕн вăй-халлă
Хăвăрт ӳсекен хула.

1950

СТАЛИНГРАД

Аслă Атăл çине пăхсанах
Эп куратăп, хуламăр, сана.
Эс тăран улăп пек ман умра,
Сталинград!
Сталинград!
Сталинград!

Эс пулмарăн тăшманăн кулли,
Пирĕн чыс—паттăрсен çут хули.
Сан яту тĕнчипе янăрать,
Сталинград!
Сталинград!
Сталинград!

Эс çĕклен çĕнтерӳ ялавне,
Кисретен тăшмансен ĕмĕтне.
Сан çинчен ман çĕршывăм юрлать,
Сталинград!
Сталинград!
Сталинград!

Чун уççи—аслă Атăл çинче,
Сан гранит пек хӳмӳ çумĕнче

Коммунизм стройки хăпарать,
Сталинград!
Сталинград!
Сталинград!
Сан тавра иксĕлми хăватпа,
Ăмăртуллăн пин-пин çăлтăрпа
Мирлĕ пурнăç çути ялтăрать,
Сталинград!
Сталинград!
Сталинград!

1949

ПАРНЕ

У трăм уйăх хăпарсан
Улма пахчипе,
Савăнайрăм кăмăлтан
Ун илемĕпе.

Илтрĕм йывăç пахчинче
Шăпчăк сассине,
Туйрăм çамрăк чĕремре
Юррăм пуррине.

Эп пуçларăм юррăма,
Чи илемлине.
Пултăр çĕрĕм-шывăма
Вăл манран парне.

1948

ЭПИР МИРШЕН

Тăван халăх сасси янăрать:
Вăрçа хирĕç эпир пĕр çын пек!
Кам чунтан пурнăçа юратать,
Çав çĕклентĕр паян пирĕнпе.

Ялкăш, ялкăш мухтавлăн,
Çĕнтерӳллĕ ялав.
Мирлĕ пурнăç, хăватлăн
Эс çĕклен, вăйлăлан!

Вăрçăпа хăратасшăн пире
Юнĕçен тăшмансем ак каллех.
Анчах тĕрĕслĕх пур тĕнчере —
Мирлĕ пурнăç вăрçа çĕнетех!

Ялкăш, ялкăш мухтавлăн,
Çĕнтерӳллĕ ялав.
Мирлĕ пурнăç, хăватлăн
Эс çĕклен, вăйлăлан!

Нихçан та эпир ярас çук
Алăран çĕнтерӳ ялавне.

Пире паллă: пырать мĕнпур çул
Пĕр тĕле — коммунизм патне.

Ялкăш, ялкăш мухтавлăн,
Çĕнтерӳллĕ ялав.
Мирлĕ пурнăç, хăватлăн
Эс çĕклен, вăйлăлан!

1950

ПОЛЬ РОБСОНА

Эп пĕрре те санпа тĕл пулман,
Куçа-куçăн тăрса калаçман,
Анчах эс ман умра яланах,
Тăван Робсон,
Парсам аллуна.

Эп — чăваш,
Эсĕ — негр юлташ!
Пирĕн халь пĕр тĕллев:
Пултăр мир!
Санпала пĕрле, паттăр салтак,
Вăрçа хирĕç тăратпăр эпир.

Эс юрлан ман çĕршыв юррине,
Сассу уçă, каять таврана.
Вăл лăпкать ырă çын чĕрине,
Кисретет ашкăнан тăшмана.

1951

КИТАЙРИ ТУССЕНЕ

Çĕкле, тăван Китай çынни,
Çĕкле татах ху хăватна.
Халь эсĕ ху çĕршыв хуçи —
Чунтан мухтав,
Салам сана!

Сана пин-пин çулсем хушши
Кышланă-çке усал тăшман.
Çĕлен пек сăхă Чан Кай-ши
Таптанине епле манан?

Ёмĕрлĕхе сан кун-çулу
Тасалчĕ çав тăшмансенчен.
Халь янăрать юрру-куллу
Çĕнелнĕ ял-хуласенче.

Китай çĕрне хĕвеллĕ кун
Хăват парать çунат сарма.
Малта пырать Мао Цзэ-дун,
Чунтан мухтав!
Салам ăна!

1950

ЭП КУРАТĂП КОРЕЯ ÇĔРНЕ

Эп куратăп Корея çĕрне:
Тăкăнать этем юнĕ унта.
Паттăр халăх тăшманăн çарне
Парăнмасть! —
Çĕмĕрет,
Аркатать.

Эп куратăп Корея çĕрне,
Хăтарать вилĕмрен вăл хăйне.
Юншăн юн!
Çичĕ ют ĕмĕрне
Хуçас çук харсăр халăх вăйне.

Эп куратăп Корея çĕрне,
Çĕнтерӳ ялавне вăл йăтать.
Чыс, мухтав — Улăп халăх çарне!
Пĕт тăшман!
Йытă вилĕм—йытта.

1951

ҪĔРШЫВĂМĂР-АННЕШĔН

Вăхăтсем хăруш, эй, атте-анне,
Хаяр тăшмансем тăсрĕç сăннине.

Маттур каччăсем, хастар сар хĕрсем,
Тухар çапăçма пурте пĕрлешсе.

Сыхлар çĕршыва — тăван аннене,
Парар мар ăна тăшман аллине.

Чуптăвар савса çĕршыв кăкăрне,
Каяр çапăçма çак вăрçă хирне.

Юратнă çĕршыв, аннеçĕм-анне,
Сан çинче курап тăшман сăннине.

Варланнă юнпа çĕлен-калтасем,
Санăн кăкăрна сăхасшăн вĕсем.

Ӳстерчĕ анне хăй чĕрки çинче,
Тыттарчĕ атте ак çак çут хĕçе.

Хĕçĕм, эс вакла тăшманăн пуçне,
Ан тăстăр текех усал сăннине.

1942

ÇУТĂ ХĔÇ

Баллада

Й ĕнерле-ха, Сантăр-каччă,
Çилçунат урхамахна.
Ялăышсем курса мухтаччăр
Сан ĕлккен маттурлăхна.
Ялăышсем-çке ăсатаççĕ,
Ăсатаççĕ тăвансем.
Сана ырă кун сунаççĕ,
Вĕл-вĕçеççĕ тутăрсем.

* * *

Сантăр-каччă йĕнерлерĕ
Çилçунат урхамахне.
— Каяс çулăм выртать, — терĕ, —
Вăрçа — хĕвеланăçне...
Ана амăш ыталарĕ,
Лăпкăн, ăшшăн чуптуса.
Ватă ашшĕ парне пачĕ
Çивĕч хĕçне вăй сунса:
— Ятăма, — тет, — ан ярсамччĕ
Аслă вăрçă хирĕнче,
Паттăр улăп пек пулсамччĕ

Эс çĕршывăм умĕнче.
Çак хĕçе-çке парнелерĕç
Мана граждан вăрçинче,
«Паттăр ĕçшĕн сана», терĕç
Пин-пин улăп умĕнче.
Акă халĕ парнелетĕп
Сана çутă хĕçĕме.
Эп пĕлетĕп, эп кĕтетĕп:
Эпир тивĕç çĕнтерме...
— Хамăр чыслă ята ямăп,
Атте, эсĕ шан мана.
Аркатмашкăн халь каятăп
Урса кайнă тăшмана. —
Сантăр-каччă, çамрăк улăп,
Тупа турĕ ун чухне,
«Пурте, — терĕ, — сывă пулăр!..»
Хăвăрт туртрĕ чĕлпĕрне.

* * *

Пĕтĕм халăх тухрĕ харăс
Аркатмашкăн тăшмана.
Паттăрсем вутпа хупларĕç
Усал çĕлен-калтана.
Сантăр хĕçĕ вăй-вылярĕ
Вутлă вăрçă хирĕнче,
Тăшмана вăл касрĕ, ватрĕ,
Шăлчĕ хамăр çĕр çинчен.

* * *

Вăрçă пĕтрĕ. Ак çĕкленчĕ
Пĕтĕм халăх уява.
Çутçанталăк илемленчĕ,
Кĕтни çитрĕ çĕршыва.

Паттăрсем çӳле йăтаççĕ
Хĕрлĕ пурçăн ялава,
Ĕмĕр-ĕмĕр ыр сунаççĕ
Хамăр аслă çĕршыва.
Сантăр-каччă таврăнайрĕ
Килне вутлă вăрçăран.
Унăн ячĕ ян-янрарĕ,
Мухтав илчĕ халăхран.
Ватă ашшĕ ыталарĕ
Паттăр ывăлне савса.
Вăл ун чух çапла каларĕ,
Ăна ăшшăн чуптуса:
— Манăн çивĕч сутă хĕçĕм
Тухрĕ икĕ тăвăлран.
Килтĕн эсĕ, çĕнтерӳçĕ,
Унпа вутлă вăрçăран...
Хуллен ĕнтĕ вăл вĕçлерĕ
Калас тенĕ сăмахне,
Ĕмĕр-ĕмĕрлĕх пиллерĕ
Хĕçне Сантăр ывăлне.

1948

ЮЛТАШ ТĂПРИ

М. Ястрана асăнса

Хĕвеланăç енчи вăрманта
Пур чечеклĕ уçланкă хĕрри.
Тантăшсем, çак хитре вырăнта
Пирĕн хаклă юлташăн тăпри.

Пуç таяр-и юлташ умĕнче,
Тăприне эрешлер чечекпе.
Вăл сыхланă хаяр кунсенче
Çĕршыва хăй таса чунĕпе.

Ĕмĕр-ĕмĕр усрар чĕрере
Хамăр çывăх юлташăн ятне.
Ӳкермен вăл нихçан та çĕре
Пурнăçпа çĕнтерӳ ялавне.

1945

ТРАКТОРИСТ

*Н*умаях та пулмасть салтакран
Килчĕ пирĕн янташ тракторист.
Пулнă вăл пит нумай çĕршывра,
Пулнă вăл пултарулла танкист.

Юратмасть мухтама вăл хăйне,
Шырамасть черченке сăмахсем.
Унсăрах унăн паттăр ĕçне
Кăтартаççĕ пире медальсем.

Чи хастар тракторист ку енче
Пулчĕ вăл кăçалхи акара.
Ахаль мар-мĕн çӳрет ун çинчен
Ырă ят, чыс-хисеп таврара.

1946

ЕҪ ЮРРИ

Хĕрӳ ĕçĕн юррине
Йĕс шăнкрав пек сасăпа
Ай, пуçлар-и,
Ылттăн ыраш пуссине,
Тантăшсемĕр, ай, васкар-и.

Хĕрӳ ĕçĕн юррине
Пурте пĕрле савăнса
Ай, юрлар-и,
Колхоз ылттăн тыррине
Ăмăртмалла, ай, вырар-и.

Хĕрӳ ĕçĕн юррине
Йĕс шăнкрав пек сасăпа
Ай, юрлар-и,
Вăхăт хаклă — çийĕнчех
Авăн çапма, ай, пуçлар-и.

Хĕрӳ ĕçĕн юррине
Пурте пĕрле пухăнса
Ай, юрлар-и,
Чи малтанхи тĕштырра,
Çĕршыв, сана, ай, парар-и.

Мухтав илнĕ ĕç юрри
Ян янраса, шăранса,
Ай, юхтăр-и,
Малашне те вăл пире
Вăй-хал парса, ай, тăтăр-и.

1947

САЛАМ ĔÇ ГЕРОЙĔСЕНЕ

Ĕç геройĕсене саламлатпăр,
Тав тăватпăр эпир чĕререн.
Вĕсен йышĕ ӳссе нумайлантăр,
Çĕнĕ ял хăват илтĕр çуллен.

Салам сире,
Мухтав сире,
Мухтав ĕç геройĕсене!
Тăван çĕршыв,
Совет çĕршыв
Паттăр ывăль-хĕрĕсене.

Ылттăн тырă хирте каш-кашлатăр,
Тинĕс евĕр хитрен хумханса.
Кашни çын ĕçе савтăр, юраттăр,
Уя тухтăр çанна тавăрса.

Салам сире,
Мухтав сире,
Мухтав ĕç геройĕсене!
Тăван çĕршыв,
Совет çĕршыв
Паттăр ывăль-хĕрĕсене.

Ӗмӗр-ӗмӗр илем кӳрсе ларччӑр
Эпир лартнӑ, ӳстернӗ садсем.
Ӗçри паттӑр çынсем йышлӑланччӑр,
Сывӑ пулччӑр тырпул ӑстисем.

Салам сире,
Мухтав сире,
Мухтав ӗç геройӗсене!
Тӑван çӗршыв,
Совет çӗршыв
Паттӑр ывӑль-хӗрӗсене.

1951

ТАЛЬЯНКА

Алла тытрăм çĕн тальянка,
Тăсса ятăм пĕрмине.
Янăратăр кĕмĕл планка,
Савăнтартăр хĕрсене.

Юрламашкăн, ташламашкăн
Пире купăс вăй парать.
Эх, тальянка, кĕмĕл планка,
Выля эсĕ аллăмра.

Урам тăрăх шăнкăр-шăнкăр
Сассу юхтăр шăранса.
Эх, тальянка, кĕмĕл планка,
Юрлар халĕ савăнса.

Ĕçре эпир пурте харсăр,
Юратмастпăр мухтанма.
Эх, тальянка, кĕмĕл сасă,
Çĕкле манăн юррăма.

1949

КĔРХИ ЮРĂ

Уй-хирти ĕçсене пуçтарсан,
Пӳлмесем тырпулпа тăп тулсан,
Эсĕ пирĕн колхоз хăни пул,
Ушкăнпа пĕрле савăн та кул.

Сад пахчи çимĕçне пуçтарсан,
Кĕрекемĕр тулли чыс пулсан,
Эс ларсамччĕ, хăта, пирĕнпе,
Çĕнĕ юрă юрла эртелпе.

Çитрĕ кĕтнĕ пуян кĕркунне,
Çитрĕ ырлăх колхоз ĕçченне.
Килсе кур эсĕ пирĕн пата,
Савăнар пĕрле, ватă хăта.

1946

ШАП-ШУР ИККЕН ҪЫРЛА ҪЕҪКИСЕМ

Халăх юррипе

Шап-шур иккен çырла, ай, çеçкисем
Атăлпала Сĕве, ай, хушшинче.
Маттур иккен колхоз, ай, хĕрĕсем
Аслă çĕршыв чыслă, ай, ĕçĕнче.

Кӳлсен кӳлĕр утне лайăххине,
Пĕкĕрен те çӳлĕ, ай, пуçлине.
Чунтан савăр тусне, маттурине,
Хурлăханран хура, ай, куçлине.

Хăвалăхран тухать, юрра ярать,
Сар пăрчăкан чĕппи, ай, мар-ши çав.
Кантăк витĕр пăхать, чупса тухать,
Колхоз маттур хĕрĕ, ай, мар-ши çав.

1938

БРИГАДИР

Шурӑмпуç килеспе бригадир
Тухса утрĕ ыраш пуссине.
Хумханать анлӑ ылттӑн уй-хир,
Пуç таять çĕр ӑстийĕ енне.

«Вӑхӑт çитнĕ, — шутлать бригадир, —
Пухмалла çак пуян тырпула...»
Вӑл вара кун çинчен тепĕр ир
Хыпарларĕ колхозлӑ яла.

1947

ЭПИР,
ÇАМРĂК ПАТТĂРСЕМ

Атьăр тухар
Вăйă пуçлăр,
Пикесем.
Ташлăр, юрлăр,
Харсăр пулăр,
Каччăсем.

Тантăшсемĕр,
Эпир çамрăк паттăрсем.
Тантăшсемĕр,
Пирĕн ылттăн алăсем.
Утар халĕ малалла
Умри такăр çулпала.

Савăк юрă
Вĕçтĕр, юхтăр
Таврана.
Пирĕн туслăх
Çирĕп пултăр
Яланах.

Тантăшсемĕр,
Эпир çамрăк паттăрсем.

Тантăшсемĕр,
Пирĕн ылттăн алăсем.
Утар халĕ малалла
Умри тӳрĕ çулпала.

Çиçтĕр ĕмĕт,
Ырă ĕмĕт
Чĕрере.
Мирлĕ пурнăç
Сывă пултăр
Тĕнчере!

Тантăшсемĕр,
Эпир çамрăк паттăрсем.
Тантăшсемĕр,
Пирĕн ылттăн алăсем.
Утар халĕ малалла
Умри аслă çулпала!

1956

АТĂЛ КАЧЧИ-ХЕРЕСЕМ

Сарă кайăк пахчара,
Чĕвĕл чĕкеç йăвара.
Тусăм ĕçлет конюхра,
Эп доярка — фермăра.

Тантăш татрĕ çырлине,
Çупкăм-çупкăм хĕрлине.
Эп суйларăм савнине
Ĕçченнине, хитрине.

Кĕмĕл сулă аллăмра
Пурçăн тутăр пуçăмра.
Эпĕ пултăм Мускавра,
Хам ĕçсемшĕн хăнара.

Чăпар куккук авăтать,
Сасси инçе ян каять.
Савни мана юратать,
Куçран пăхса йăл кулать.

Уй-хир, вăрман ешерет,
Шăпчăк юрă кĕвĕлет.
Йĕри-тавра çуркунне,
Чунтан савсан пĕр-пĕрне.

Ура тапса, ал çупса,
Çĕнĕ такмак каласа,
Ташлар халĕ, çамрăксем,
Атăл каччи-хĕрĕсем.

1957

ҪАМРĂКСЕН МАРШĔ

Тӳпе сенкер, таса.
Умра — уй-хир, вăрман...
Тăван çĕршыв санпа
Эпир пĕрле ялан.

Вĕл-вĕçен ялавпа,
Ленин уçнă çулпа
Çамрăк гварди утать малалла!

Тăван çĕршыв пире
Ыр кун, телей сунать.
Хавас тапать чĕре
Çĕн ӳсĕмшĕн çунать.

Вĕл-вĕçен ялавпа,
Ленин уçнă çулпа
Çамрăк гварди утать малалла!

Патвар пулар ĕçре,
Хастар — вĕренӳре.
Тăван çĕршыв-анне
Çапла хушать пире.

Вĕл-вĕçен ялавпа,
Ленин уçнă çулпа
Çамрăк гварди утать малалла!

1956

АТЬĂР ВĂЙЙА ТУХАР-И

Атьăр вăййа тухар-и,
Çĕнĕ сăвă калар-и.
Пирĕн çине чун савни
Пăхса йăл-йăл култăр-и.

Атьăр вăййа тухар-и,
Çӳл тӳпене пăхар-и,
Çитмĕл çичĕ çăлтăр пек,
Савăнайса выляр-и.

Атьăр вăййа тухар-и,
Савнăç юрри пуçлар-и,
Йĕс шăнкрав пек сасăпа
Çĕршыв ятне мухтар-и.

Атьăр вăййа тухар-и,
Вăйă кĕвви калар-и,
Вăй илемпе савăнса
Ĕçре маттур пулар-и.

1946

КОМСОМОЛ ЮРРИ

Юрлар халĕ эпир çак юрра,
Комсомол, сан ятна мухтаса.
Пирĕн сасă илемлĕн янрать,
Вăл каять таврана хумханса.

Комсомол — чĕрери чаплă ят —
Иксĕлми хăватпа ялкăшать.
Çак ята юратса усрама
Тăван парти пире ыр сунать.

Çитĕнетпĕр эпир кун курса,
Пирĕн пурнăç — хитре çуркунне.
Ленин пачĕ пире çул уçса,
Аслă çул — коммунизм патне.

Комсомол — чĕрери чаплă ят —
Иксĕлми хăватпа ялкăшать.
Çак ята юратса усрама
Тăван парти пире ыр сунать.

Эпир харсăр, ĕçе тарават,
Ĕмĕт-шухăш ялан малалла.

Çĕршыв пачĕ пире вăй-хăват,
Çамрăк гвардин малта пулмалла!

Комсомол — чĕрери чаплă ят —
Иксĕлми хăватпа ялкăшать.
Çак ята юратса усрама
Тăван парти пире ыр сунать.

Пĕрре мар эпир тухнă вăрçа
Юнĕçен тăшманпа çапăçма.
Пирĕн çамрăк ăру нихăçан
Хăйĕн чыслă ятне çухатман.

Комсомол — чĕрери чаплă ят —
Иксĕлми хăватпа ялкăшать.
Çак ята юратса усрама
Тăван парти пире ыр сунать.

1948

УТĂРА

Ут çулаççĕ хĕрсем Кĕтне шыв хĕрринче;
Çависем ялкăшаççĕ хĕвел çутинче.

Паккус хыççăн паккус ярăм-ярăм юлать,
Тантăшсемĕр, кăçал лайăх утă пулать.

Уй-хирте, улăхра тулли пурнăç вĕрет.
Хăват пур, илем пур — пĕрлешӳллĕ ĕçре.

1946

ВИҪЕ ЫВӐЛ

Ҫитĕнтерчĕ виҫĕ ывӑл
Ман аппаҫăм Марине.
Пурте селĕм, пурте сывă,
Ытарма çук хăйсене.
Виҫĕ ывӑл: пĕри летчик,
Тепри палла тракторист.
Асли пирĕн агротехник,
Вăлăх чаплă машинист.
Пĕрре летчик вĕҫсе килчĕ,
Акăш евĕр, ирхине.
Ик моторлă самолечĕ
Анса ларчĕ ял çумне.
Виҫĕ ывӑл: пурте харсăр,
Пĕрле пулчĕҫ уявра.
Епле чăтăн савăнмасăр,
Пăхса виҫĕ паттăра.
Сисĕнмесĕр вăхăт иртрĕ,
Хĕвел тухрĕ ял çине...
Çĕнĕ кунăн çутă ирĕ
Ыр çул сунчĕ вĕсене.

1951

ТУСЛĂХ ЮРРИ

Ҫунтăр кĕмĕл сывлăм
Анлă хирсенче.
Ырă, уҫă сывлăш
Тăтăр ҫĕр ҫинче.

Эс, туслăх ялавĕ,
Ҫиҫ, ялкăш ялан.
Яш-кĕрĕм уявĕ
Кĕрлетĕр паян.

Лăпкă ăшă ҫилĕ
Вĕртĕр кăнтăртан.
Пурнăҫ пулĕ мирлĕ
Эпĕр кар тăрсан.

Эс, туслăх ялавĕ,
Ҫиҫ, ялкăш ялан.
Яш-кĕрĕм уявĕ
Кĕрлетĕр паян.

Чĕремĕр хĕлхемĕ
Сӳнмĕ нихăҫан.
Ҫĕн пурнăҫ илемĕ —
Туслăх сыв пулсан.

Эс, туслăх ялавĕ,
Çиç, ялкăш ялан.
Яш-кĕрĕм уявĕ
Кĕрлетĕр паян.

1957

ИРХИНЕ

Сывлăм та типмен-ха ирхине,
Йăлтăр-йăлтăр вылять уй-хирте.
Савăнса авăтать путене,
Çунатне çат! çапса хĕпĕртет.

Анăçран ăшă çилĕ вĕрет,
Ылттăн тулă пусси хумханать.
Сар хĕвел пирĕн хӳхĕм çĕре
Чун пилленĕн савса ăшăтать.

Тырпула сĕткен тутă кĕрет,
Ырă кунăн шевли ун çинче.
Сирĕлет ерипен шур тĕтре,
Вĕрет пурнăç чăваш çĕрĕнче.

1948

ҪĔН ҪĔРЕ, ҪĔПĔРЕ

Тăван парти чĕннипе,
Ҫамрăк чĕре хушнипе
Ҫул тытатпăр эртелпе

Ҫĕн ҫĕре,
Ҫĕпĕре
Ҫерем уҫма.
Ҫĕн ҫĕре,
Ҫĕпĕре
Завод тума.

Пире, хĕрсем-каччăсем,
Пĕрле ӳснĕ тантăшсем,
Кĕтеҫ Ҫĕпĕр ҫыннисем

Ҫĕн ҫĕре,
Ҫĕпĕре
Ҫерем уҫма.
Ҫĕн ҫĕре,
Ҫĕпĕре
Завод тума.

Хӗвел тухать тухӑҫран,
Аш ҫил вӗрет кӑнтӑртан,
Каяҫ пӗтӗм тавраран

Ҫӗн ҫӗре,
Ҫӗпӗре
Ҫерем уҫма.
Ҫӗн ҫӗре,
Ҫӗпӗре
Завод тума.

1955

ҪУРХИ САНСЕМ

Чаплӑ-çке çуркунне:
Туллин сывлать çӗр-анне,
Сарать анлӑ çунатпе.

Хитре-çке çуркунне:
Сад пахчийӗ чечекре,
Шӑпчӑк юрлать ӗшнере.

Ырӑ-çке çуркунне:
Чун савнипе тӗл пулма,
Ӑшшӑн-ӑшшӑн каласма.

Аван-çке çуркунне:
Туян çӗршыв илемне,
Ирех тӑран ӗç умне.

1956

КАЯС ÇУЛ

Умӑмра халь выртать каяс çул,
Уйрӑлатпӑр, савни, чипер юл.

Эс пӗлен: Çӗршыв чӗнчӗ пире...
Ак путевка. Çул ман — Çӗпӗре.

Юлас марччӗ хам тантӑшсенчен,
Баскать пурнӑç, хӑвах эс пӗлен

Ман ӑна ӗçӗмпе çитмелле.
Ёмӗте пурнӑçа кӗртмелле.

Умӑмра халь выртать каяс çул,
Уйрӑлатпӑр, савни, чипер юл.

1956

ХĔР ÇЫРĂВĔ

Астăватăп пĕрре çурхи каç,
Тӳпере çăлтăрсем ялкăшаç.
Эс каларăн мана ун чухне:
«Манас марччĕ нихçан пĕр-пĕрне...»

Çамрăк вăхăт пит хăвăрт иртет:
Уйрăлни виçĕ çул ак çитет.
Çĕнелет тăван ял кунсерен,
Чечекре эсĕ лартнă сирень.

Савнă тусăм, камран пытарас,
Ăшăм саншăн çунать, мĕн тăвас.
Эс ытла та манран аякра,
Уралтан та инçе, Алтайра.

Тен, унта та чылай пуль хĕрсем,
Ху пекех хĕвел пек хитрисем...
Шутласан, кӳлешес те килет,
Анчах пур-ши усси.
Кам пĕлет?

Тусăм, тусăм, текех ан çунтар,
Хăвăртрах, хальтерех çыру яр.
Эп пырасшăн кăçал сан патна:
Пит кичем чун савнисĕр мана.

1950

КЕМЕЛ УЙАХ ХАПАРАТЬ

Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать,
Йăлтăр-йăлтăр курăнать.
Хĕре качча ыталать,
Ыталать те чуптăвать.

Ай-ай-ай! ыталать,
Ыталать те чуптăвать.

Кĕмĕл уйăх хăпарать,
Вăрттăн пăхса йăл кулать.
Хĕр каччăран вăтанать,
Çĕмĕрт айне пытанать.

Ай-ай-ай! вăтанать,
Çĕмĕрт айне пытанать.

Шуçăм çути палăрать,
Шăпчăк юрă шăратать,
Каччă хĕре ăсатать,
Çĕр кĕскишĕн кулянать.

Ай-ай-ай! ăсатать,
Çĕр кĕскишĕн кулянать.

1955

КУҪНЕ ХЕСРЕ САВНĂ ТУСĂМ

Куҫне хĕсрĕ савнă тусăм
Пăхса урăх хĕр çине.
Хĕрӳленчĕ манăн туйăм,
Қăварланчĕ ун чухне.

— Қаласамччĕ, савнă тусăм,
Мана мĕншĕн çунтаран?
Ху калатăн: «Ылтăн, чунăм...»
Акă халĕ улталан?

Ан тив, эсĕ ялан харсăр,
Пултарулла та ĕçчен.
Анчах мĕншĕн пĕр сăлтавсăр
Мана халĕ манас тен?

Шухăшларăм, ăнланмарăм
Қаччă камшăн çуннине.
Йăлăнмарăм, ал памарăм—
Ан выляттăр шухăшне.

1955

АН ХУРЛА

Ташла, тусăм, эс ташла,
Çĕнĕ çемĕ каласа.
Анчах мана ан хурла,
Эп юлас çук намăса.

Хăвах пĕлен ман çинчен:
Сăнăм тухрĕ хаçатра.
— Пултарулла, пит ĕçчен,—
Теççĕ пурте колхозра.

Вăтанмасть те — мухтанать,
Тесе пĕртте ан ятла.
Виçĕ каччă хăтана
Пычĕç çич кун каялла.

Мĕн калас тен — эп санах
Савап чунтан-чĕререн.
Хăçан эс ху хăтана
Пырассине пĕлтерен.

Пырсан пыр эс хăвăртрах,
Мĕншĕн нумай кĕттерен?

Хальхи хĕрӳ вăхăтра
Ĕçсем нумай, ху пĕлен.

Ташла, тусăм, эс ташла,
Çĕнĕ çемĕ каласа.
Анчах мана ан хурла,
Эп юлас çук намăса.

1954

КИМĔПЕ

Ç утă уйăх,
Ҫĕмĕл уйăх
Тӳпере.
Ырă туйăм,
Ăшă туйăм
Тапать пирĕн чĕрере.

Савнă тусăм, кил эс, лар,
Ҫаҫĕ лăпкă, ярăнар.

Çăмăл кимĕ,
Çĕнĕ кимĕ
Ытканать.
Ҫăнтăр çилĕ,
Лăпкă çилĕ
Пире ăшшăн çупăрлать.

Савнă тусăм, кил эс, лар,
Ҫаҫĕ лăпкă, ярăнар.

Аслă Атăл,
Ирĕк Атăл,
Тав сана!

Эсĕ капăр,
Эсĕ харсăр,
Çĕклен хăвăн хăватна.

Савнă тусăм, кил эс, лар,
Каçĕ лăпкă, ярăнар.

1956

ТУЛĂХ ПУЛТĂР

У мра капăр çуркуннемĕр,
Кунĕ ăшă та таса.
Сывлать лăпкăн çĕр-аннемĕр,
Ĕçлет халăх тăрăшса.

Вăйлă пултăр тырă-пулă,
Лартăр сарă хăмăш пек.
Савăк юрă, савăк кулă
Кайтăр хирĕн тăршшĕпе.

Тулăх пултăр кĕркуннемĕр,
Кунĕ тăтăр йăл кулса.
Канлĕн кантăр çĕр-аннемĕр,
Кантăр çĕнĕ вăй пухса.

1950

МĔН ТĂВАС...

У йăх вăрттăн кулнă чух,
Их, чух, кулнă чух
Эпĕ савнă тусăма:
«Тух-ха, терĕм, урама».
Каччă тухрĕ килĕнчен
Пĕрре тесе каличчен,
Манпа кӳлĕ хĕрринче
Тăчĕ çурçĕр иртиччен.

Хĕртсе хĕвел пăхнă чух,
Их, чух, пăхнă чух
Эпĕ савнă тусăма:
«Тух-ха, терĕм, ут çулма».
Каччă печĕ чир-чĕре:
«Тытрĕ пуль, тет, чĕмере».
Хăй çаптарчĕ сулхăнра
Тутлă ыйхă виç çавра.

Çĕрле сывлăм ӳкнĕ чух,
Их, чух, ӳкнĕ чух
Эпĕ савнă тусăма:
«Тух-ха, терĕм, выляма».

Каччӑ тухрĕ килĕнчен
Куҫа хупса иличчен.
Манпа хурӑн айĕнче
Ларчĕ шуҫӑм киличчен.

Кунсем лайӑх тӑнӑ чух,
Их, чух, тӑнӑ чух
Эпĕ савнӑ тусӑма:
«Тух-ха, терĕм, хурт пӑхма».
Каччӑ тупрĕ сӑлтавне,
Кĕрсе ларчĕ пӳрт умне.
Вĕлле хурчĕ сӑхасран
Пӑхса выртрĕ хушӑкран.

Каҫсем ырӑ тӑнӑ чух,
Их, чух, тӑнӑ чух
Мана каччӑ: «Ӳрама
Тух-ха, терĕ, каласа».
Калӑр ĕнтĕ, мĕн тӑвас:
Те тухас мар, те тухас?
Ĕнтĕ ун пек каччӑпа
Епле утӑн пĕр ҫулпа?

1957

САД ПАХЧИНЧЕ

Сад пахчи шап-шурах чечекре,
Ытарма çук çурхи илемне.
Çакăнта хамăн савнă хĕре
Эпĕ куртăм паян ирхине.

Савнă тусăм утать васкаса,
Аллинче икĕ симĕс витре.
Сăнĕ ун çут хĕвел пек таса,
Утти акăш утти пек хитре.

Савнă тусăм колхоз садĕнче
Юрласа улмуççи шăварать.
Ун хаваслă, ĕçчен сăнĕнче
Тулли ĕмĕт çиççе йăлкăшать.

1946

ЭС, ТУХСАМЧЧĔ...*

Ч ӳречӳ курăнать йăлтăр-йăлтăр,
Сад пахчи тĕлĕрет-мĕн канса.
Эс тухсамччĕ, каçпа çутă çăлтăр
Тӳпене тухнă пек, ярăнса.

Валакран шыв шарлать пит илемлĕн
Ыйăхри улăха вăратса.
Эс тухсамччĕ, сада тин иленнĕ
Шăпчăк пек, юрруна шăратса.

Тĕтрепе ак пĕркенчĕ тавралăх,
Ир те килĕ часах çуталса.
Эс тухсам, чун-чĕре савăнмалăх
Ытарми тутупа йăл кулса.

Тем ĕçлерĕн, пĕлме хăяймарăм,
Çĕрĕпе те сӳнмерĕ çутту.
Çутăлсан, тен, тухмашкăн ăнкарăн.
Пит кичем-çке капла юрату!

1950

---

* Н. Евстафьевпа пĕрле çырнă.

САВНĂ ТУСĂМА

Ç утă кĕмĕл сывлăм
Ӳкнĕ таврана.
Ирхи уçă сывлăш
Ачашлать чуна.

Вăштăр кăна вăштăр
Ăшă çил вĕрет.
Тусăм евĕр вăрттăн
Чуптуса илет.

Сад пахчи пит капăр,—
Ларнă чечеке.
Юрлать тапхăр-тапхăр
Унта сарпике.

Манăн шухăш-кăмăл
Унпала ялан.
Ĕçлеме те çăмăл
Чун савни пулсан.

Пурнăçăмăр селĕм,
Ешĕл çуркунне.

Юрлар, сарпикеçĕм,
Савар пĕр-пĕрне.

Çутă кĕмĕл сывлăм
Ӳкнĕ таврана.
Эп сунатăп ырлăх,
Тусăмçăм, сана.

1956

КĔТСЕ ИЛ, САВНИҪЕМ*

Ҫ·авра кĕмĕл уйăх тӳпене тухсан,
ҫутине сапсан,
Кĕтсе ил, савниҫĕм, кăмăллăн пăхса,
ҫепĕççĕн кулса.
Санпала эп тухăп Атăл хĕррине,
Курса савăнмашкăн ҫĕршыв илемне.

Саншăн ман чĕремçĕм тунсăхлă пулсан,
ҫуннине туйсан,
Йăпатсам, савниҫĕм, кăмăллăн пăхса,
ҫепĕççĕн кулса.
Эп ун чухне туйăп юрату вăйне,
Эсĕ, чунăм, маншăн ҫывăх иккенне.

Сенкер шурăмпуҫĕ килни курăнсан,
автан аватсан,
Асатсам, савниҫĕм, кăмăллăн пăхса,
ҫепĕççĕн кулса.
Утăпăр хаваслăн, утăпăр пĕрле
Лăпкă ăшă ҫилĕ ачашлĕ пире.

---

* В. Веселовпа пĕрле ҫырнă.

ҪЕМЕРТ ҪЕҪКИ ҪУРӐЛСАН

Ҫ ӗмӗрт ҫеҫки ҫурӑлсан,
Шӑпчӑк юрӑ пуҫласан,
Тухап кӳлӗ хӗррине,
Кӗтеп чунӑм савнине.

Кӳлӗ лӑпкӑн хумхансан,
Шурӑ хурӑн пуҫ тайсан,
Епле ырӑ савнипе
Утма ҫӗмӗрт хушшипе.

1956

КУККУК АВĂТАТЬ

Ешĕл çуркунне.
Сар хĕвел хĕртет.
Йывăç хушшипе
Ăшă çил вĕрет.

Куккук авăтать,
Вăрман янăрать.

Шăпчăк савăнса
Юрлать юррине.
Ытарма та çук
Çĕршыв илемне.

Куккук авăтать,
Вăрман янăрать.

1950

ТЕЛЕЙЛĔ ТУСЛĂХ

Лăпкăн-лăпкăн вĕрчĕ таса ăшă çилĕ,
Ылттăн хĕвел тухрĕ янкăр тӳпене.
Хитре уçă сасă уй-хир тăрăх кайрĕ,
Эпĕ илтрĕм савнă сар хĕр юррине.

Кăмăллăн савниçĕм мана ырлăх сунчĕ,
Сума сурĕ хăйĕн ĕçри тантăшне.
Сăнĕ ун сăпайлăн ялкăшса çуталчĕ,
Юрри илем кӳчĕ колхоз уй-хирне.

Лăпкăн-лăпкăн вĕрчĕ таса ăшă çилĕ,
Ылттăн хĕвел шурĕ пĕлĕт хушшипе.
Савнă тусăм, халĕ эпир те телейлĕ,
Кун-çулăмăр чапĕ çав çут хĕвел пек.

1948

КАҪХИ ИЛЕМ

Сад пахчийĕ чечек сарчĕ,
Епле ырă сывлама.
Савнă тусăм, эс тухсамччĕ
Пĕрле юрă юрлама.

Ҫӳлте ылттăн çурла уйăх
Шăвать пĕлĕт хушшипе.
Эп куратăп: каçхи улăх
Ташлать унăн çутипе.

Эх, мĕн чухлĕ кĕмĕл çăлтăр
Çиçет пĕлĕт маччинче.
Лăпкă кӳлĕ йăлтăр-йăлтăр
Вылять улăх варринче.

Çакна эпĕ йăлтах çыртăм
Таса шурă хут çине.
Каçхине те эс, çĕршывăм,
Çухатмастăн илемне.

1949

ЭП ЯТЛАРĂМ ИВАНА

Вĕçкĕн Иван мухтанать,
Пуш параппан çаптарать,
Тĕрĕссипе, хăй ĕçре
Пырать кайра, хӳрере.

Тантăшĕсем акара,
Вăл пур — выртать сулхăнра.
Каç пулсан çеç чун кĕрет,
Хĕрсем патне вĕçтерет.

Чипер хĕрсем умĕнче
Вĕçме хатĕр пĕлĕте.
Çунат çукки çумĕнче
Кансĕрлет-мĕн йĕкĕте.

1956

* * *

Эп шыратăп сана,
Эс шыран пуль мана..
Ан ятла: хам малтан
Калаçса татăлман.

Кĕрес мар-ши клуба?
Тен, тĕл пулăп санпа.

1957

КЕТЕРУК

Чиперук,
Чиперук,
Пирĕн матур Кĕтерук.
Епле пулма пĕлнĕ-ши,
Мĕнле каччă савмĕ-ши.

Кĕтерук,
Кĕтерук,
Саврĕç ăна пĕр тăрук
Икĕ каччă — Михала
Тата вĕçкĕн Микула.

«Юрату,
Юрату...
Эсĕ мана кăмăлла...»
Çапла калать Михала,
«Эх, чунăм!» тет Микула.

Чиперук,
Чиперук,
Йăрăс пӳлĕ Кĕтерук
Çыру илчĕ Алтайран,
Чунĕ савнă каччăран.

Кĕтерук,
Кĕтерук
Сар хĕр, ĕçчен Кĕтерук
Хирĕç çырчĕ çав каçах.
«Пырап — терĕ, — кăçалах!..»

1955

ҪЫВĂХ ҪЫННĂМА

Ҫывăҫ ҫыннăм, савнă тусăм,
Яту юлтăр сăввăмра.
Сăну санăн, сенкер куҫăм,
Ялан манăн умăмра.

Ҫулăм витĕр эпĕ утрăм,
Ҫулсем пулчĕҫ — тăвалла.
Анчах, чунăм, эс юлмарăн,—
Манпа пытăн малалла!

Савнă тусăм, сенкер куҫăм,
Халĕ пирĕн пĕр тĕллев...
Пурнăҫ ырă, ҫулсем уҫă, —
Ĕмĕр утăпăр пĕрле.

1949

АША ҪУМĂР

Аслатийĕ кĕр-кĕрлерĕ,
Ҫумăр ҫурĕ шавласа.
Асаматăн ҫĕн кĕперĕ
Ҫĕкленейрĕ авăнса.

Капăрланчĕ шурă хурăн,
Тумла юхрĕ ҫĕр ҫине.
Ҫаран-улăх йăлтах урăх:
Ытарма çук илемне.
1949

ВĂЛ ÇĂЛТĂР ПЕК ТУХРĔ

Кăссерен тухап эп
Атăл хĕррине,
Пăхса савăнатăп
Çĕршыв илемне.

Эп чунтан кĕтетĕп
Хамăн савнине,
Тусăм тухĕ, тетĕп
Манăн куç умне.

Шăпчăксем юрлаççĕ,
Лăпкă каçхине,
Вĕсем те туяççĕ
Çĕршыв илемне.

Сарă уйăх шурĕ
Пĕлĕт хĕррипе.
Мана савни курчĕ
Унăн çутипе.

Эпĕ кĕтсе илтĕм
Чунăм савнине,
Вăл çăлтăр пек тухрĕ
Манăн куç умне.

1945

* * *

Эпĕ çитрĕм таçти çĕрсене,
Чылай куртăм чипер хĕрсене.
Анчах, çывăх çыннăм Марине,
Эсех юлтăн чĕрем варрине.

1949

КИПАРИС

Çӳлĕ симĕс кипарис
Умӑмра.
Ĕнтĕ лайӑх эп туяп
Кӑнтӑра.

Сарӑ кайӑк ун çинче
Юр юрлать,
Лӑпкӑ кунӑн ӑшшинче
Савӑнать.

Ылттӑн хĕвел пайӑрки
Вӑй-вылять.
Кипарисӑн йĕкелли
Çуталать.

Симĕс, кӑтра кипарис
Умӑмра.
Ĕнтĕ лайӑх эп туяп
Кӑнтӑра.

1946

ЮРĂ

Сад пахчи чечекпе тумлансан,
Эп илтеп шăпчăксен юррине.
Вĕсемех те юрлаç савăнса,
Тăван çĕрĕм, сана мухтаса.

Тӳпене сар хĕвел хăпарсан,
Эп илтеп çамрăксен юррине.
Вĕсемех те юрлаç савăнса,
Тăван çĕрĕм, сана мухтаса.

Уй-хирсем тырпулпа кашласан
Эп илтеп ват çынсен юррине.
Вĕсемех те юрлаç савăнса,
Тăван çĕрĕм, сана мухтаса.

1946

ЧЕЧЕК ҪЫХХИ

Кӑнтӑртан ӑшӑ ҫилӗ вӗрет,
Ачашлать шур чечек ҫыххине.
Урампа ҫамрӑк каччӑ иртет,
Тем калать ҫумӗнчи савнине.

Уй-хиртен ырӑ шӑршӑ килет,
Ҫӗмӗл ҫӑлтӑр вылять тӳпере.
Шур чечек ҫыххине парнелет
Ҫамрӑк каччӑ хӑй савнӑ хӗре.

«Пурнӑҫ пултӑр илемлӗ, таса,
Ялан тӑтӑр тулли уйӑх пек».
Каччӑ утрӗ ҫапла каласа
Малалла ҫумӗнчи савнипе.

1947

ПĔЛЕЙМЕН ХАЛИЧЧĔН...

Пĕлеймен халиччен эп сана:
Тус тесе йăлтах уçнă чуна.

Эсĕ пур сар çу пек шăранан,
Пăрăн çеç, — кышламашкăн пуçлан.

Тилĕ чунĕ санра, ма тунас,
Кам пĕлет, уншăн, тен, эс хавас.

Пăтратан этемсен туслăхне,
Аркатан тĕк тăран çемьене...

Ку йăлтах саншăн тутлă апат.
Кай кунтан!
Текех ан йăпăлтат.

Эп курап сан чунна витĕрех,
Ана шĕкĕ çиет, —
çитĕрех!

Эс тус мар, икĕ питлĕ этем!
Кун çинчен кашнине евитлем.

1956

УЛĂМ, ХĂМПĂ, ÇĂПАТА

Халăх юмахĕнчен

Пурăннă, тет, пĕр ялта
Улăм, хăмпă, çăпата.
Пĕрре, ешĕл çуркунне,
Кайнă вĕсем сертене.
Пырсан-пырсан çул çинче
Курчĕç: улăх хĕрринче
Çырма юхать шавласа,
Сар хĕвелпе çуталса.
Ĕнтĕ мĕскер тумалла,
Мĕнле каçса каймалла.
— Ларт эс пире ху çине,
Кăçарсамччĕ леш енне...—
Сĕнчĕ çăпати хăмпа
Ырă, ăшă кăмăлпа.
Хăмпă пăхрĕ ун çине,
Уçрĕ вăрттăн шухăшне:
— Усă пулĕ-ши манран,
Кăçă тăвар улăмран...
Улăм сăлтав шырамасть,
Тӳрре тухма шутламасть:
Кăçă пулчĕ — çул уçать,

Уншăн хăй те савăнать.
Çырма урлă чăн малтан
Кăçмалла-мĕн çăпатан.
Улăм-каçă чăтаймасть,
Вăйĕ çук ун—йăтаймасть.
Анчĕ кайрĕ çăпата
Тӳрех шыва тупата!
Хăмпă кулать лăхлатса,
Ик пĕççине шарт! çапса.
Кулчĕ те вăл куласса —
Карăннипе çатлатса
Хăй те кайрĕ çурăлса.

1956

ТУПМАЛЛИ

Октябрь 5
Ленин уçнă çулпа 6
Çĕршывăмăр 8
Тăван партие мухтав! 10
Чĕре юрри 12
Ленин кĕнеки 13
Çутă ĕмĕт 14
Иртнĕ çул 15
Манăн чунăм таса 17
Атăл 18
Тăван хула 20
Сталинград 21
Парне 23
Эпир миршĕн 24
Поль Робсона 26
Китайри туссене 27
Эп куратăп Корея çĕрне 28
Çĕршывăмăр-аннешĕн 29
Çутă хĕç 30
Юлташ тăпри 33
Тракторист 34
Ĕç юрри 35
Салам ĕç геройĕсене 37
Тальянка 39
Кĕрхи юрă 40
Шап-шур иккен çырла çеçкисем 41
Бригадир 42
Эпир, çамрăк паттăрсем 43
Атăл каччи-хĕрĕсем 45

Çамрăксен маршĕ 47
Атьăр вăйăа тухар-и 49
Комсомол юрри 50
Утăра 52
Виçĕ ывăл 53
Туслăх юрри 54
Ирхине 56
Çĕн çĕре, Çĕпĕре 57
Çурхи сăнсем 59
Каяс çул 60
Хĕр çырăвĕ 61
Кĕмĕл уйăх хăпарать 63
Куçне хĕсрĕ савнă тусăм 64
Ан хурла 65
Кимĕпе 67
Тулăх пултăр 69
Мĕн тăвас 70
Сад пахчинче 72
Эс тухсамччĕ 73
Савнă тусăма 74
Кĕтсе ил, савниçĕм 76
Çĕмĕрт çеçки çурăлсан 77
Куккук аватать 78
Телейлĕ туслăх 79
Каçхи илем 80
Эп ятларăм Ивана 81
Эп шыратăп 82
Кĕтерук 83
Çывăх çыннăма 85
Ăшă çумăр 86
Вăл çăлтăр пек тухрĕ 87
Эпĕ çитрĕм 88
Кипарис 89
Юрă 90
Чечек çыххи 91
Пĕлеймен халиччен 92
Улăм, хăмпă, çăпата. *Юмах* 93

Цена 1 руб. 30 коп.